ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ÇАР СЛУЖБИНЧЕ, РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН НАЦИ ГВАРДИЙЁН ÇАРЁСЕНЧЕ СЛУЖБĂРА ТĂНĂ ЧУХНЕ ПУÇЁСЕНЕ ХУНĂ (ВИЛНЁ) ÇЫНСЕН ÇЕМЙИСЕН ЧЛЕНЁСЕНЕ ПЁР ХУТЧЕН УКÇА ПАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 1 СТАТЙИНЕ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН ХЕÇ-ПĂШАЛЛĂ ВĂЙЁСЕМ УМЁНЧЕ ТĂРАКАН ЗАДАЧĂСЕНЕ ПУРНĂÇЛАМА ХĂЙСЕН ИРЕКЕПЕ ПУЛĂШАССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН КОНТРАКТ ТУНĂ, РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН ХЕÇ-ПĂШАЛЛĂ ВĂЙЁСЕМ УМЁНЧЕ ТĂРАКАН ЗАДАЧĂСЕНЕ ПУРНĂÇЛАМА ПУЛĂШАКАН ОРГАНИЗАЦИСЕМПЕ КОНТРАКТ ТУНĂ (ЫТТИ ПРАВО ХУТШĂНĂВЁСЕНЧЕ ТĂНĂ) РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН ПУÇЁСЕНЕ ХУНĂ (ВИЛНЁ) ГРАЖДАНЁСЕН ÇЕМЙИСЕН ЧЛЕНЁСЕНЕ ПЁР ХУТЧЕН ПАРАКАН УКÇА ТЎЛЕВЁ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 1 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи чӗк уйăхĕн 21-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Çар службинче, Раççей Федерацийён наци гвардийён çарĕсенче службăра тăнă чухне пуçĕсене хунă (вилнĕ) çынсен çемйисен

членĕсене пĕр хутчен укçа парасси çинчен" 2022 çулхи ака уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 33 №-лĕ саккунĕн ("Республика" хаçат, 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ) 1 статйин пĕрремĕш абзацне улшăну кĕртес, унта "çавăн пекех 2022 çулхи авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа Запорожье облаçĕн тата Херсон облаçĕн территорийĕсенчи" сăмахсене "2022 çулхи авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа Запорожье облаçĕн тата Херсон облаçĕн территорийĕсенчи ятарлă çар операцине хутшăнса е вĕсем Раççей Федерацийĕн территорине хĕç-пăшалпа тапăнса кĕнине сирсе ярас енĕпе задачăсем пурнăçласа, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн патшалăх чиккин участокĕсенче тата 2022 çулхи нарăс уйăхĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Донецк Халăх Республикин, Луганск Халăх Республикин, Украина территорийĕсенче, 2022 çулхи авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа Запорожье облаçĕпе Херсон облаçĕн территорийĕсенче ятарлă çар операцийĕ иртекен вырăнсемпе çумлăн вырнаçнă Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен чикĕ хĕрринчи территорийĕсенчи хĕç-пăшаллă провокацисем вăхăтĕнче" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Чăваш Республикин "Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама хăйсен ирĕкĕпе пулăшасси çинчен калакан контракт тунă, Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама пулăшакан организацисемпе контракт тунă (ытти право хутшăнăвĕсенче тăнă) Раççей Федерацийĕн пуçĕсене хунă (вилнĕ) гражданĕсен çемйисен членĕсене пĕр хутчен паракан укçа тӳлевĕ çинчен" 2022 çулхи раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 129 №-лĕ саккунĕн ("Республика" хаçат, 2022, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2024, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ) 1 статйин пĕрремĕш абзацне улшăну кĕртес, унта "çавăн пекех 2022 çулхи авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа Запорожье облаçĕн тата Херсон облаçĕн территорийĕсенчи" сăмахсене "2022 çулхи авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа Запорожье облаçĕн тата Херсон облаçĕн территорийĕсенчи ятарлă çар операцине хутшăнса е вĕсем Раççей Федерацийĕн территорине хĕç-пăшалпа тапăнса кĕнине сирсе ярас енĕпе задачăсем пурнăçласа, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн патшалăх чиккин участокĕсенче тата 2022 çулхи нарăс уйăхĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Донецк Халăх Республикин, Луганск Халăх Республикин, Украина территорийĕсенче, 2022 çулхи авăн уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа Запорожье облаçĕпе Херсон облаçĕн

территорийĕсенче ятарлă çар операцийĕ иртекен вырăнсемпе çумлăн вырнаçнă Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен чикĕ хĕрринчи территорийĕсенчи хĕç-пăшаллă провокацисем вăхăтĕнче" сăмахсемпе улăштарас.

3 статья

Çак Саккун ăна пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет тата 2022 çулхи нарăс уйăхĕн 24-мĕшĕнчен пуçланнă право хутшăнăвĕсене пырса тивет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕ
75 №